И. Я. ЯКОВЛЕВ



# САРМАНТЕЙ



ЧАВАШГОСИЗДАТ — 1956





Сармантейӗн сарӑ чӑххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ;



ăна шăши пынă та хӳрипе çапса çĕмĕрнĕ.



Сармантей те йĕрет, сарă чăххи те какалать.



Хапхи калать:
— Манӑн та уҫӑлса хупӑнас,— тет.



Анать вăкăр шыва куллен-кун.

— Хапха, эсĕ мĕншĕн уçăлса хупăнатăн? — тет.

— Уçăлса хупăнмасăр, — тет. — Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă; ăна шăши пынă та хÿрипе çапса çĕмĕрнĕ. Сармантей те йĕрет, сарă чăххи те какалать, — тет.



Вăкăр калать:
— Манăн та мĕкĕрсе анас, — тет. Мĕкĕрсе анать шыв хĕррине.
Шыв калать:
— Мĕншĕн, вăкăр, мĕкĕретĕн?



— Мĕкĕрмесĕр, — тет. — Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă, тет; ăна шăши пынă та хўрипе çапса çĕмĕрнĕ, тет. Сармантей те йĕрет, сарă чăххи те какалать, тет, хапхи те уçăлса хупăнать.

Шыв калать:

— Манăн та хумханас, — тет.



Пĕр çĕнĕ çын шыв ăсма анать:
— Шыв, мĕншĕн хумханатăн?—тет.
— Хумханмасăр,—тет.—Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă, тет; ăна шăши пынă та хӳрипе çапса çĕмĕрнĕ, тет. Сармантей те йĕрет, сарă чăххи те какалать, тет, хапхи те уçăлса хупăнать, тет, вăкăрĕ те мĕкĕрет.



Çĕнĕ çын калать:
— Манăн та пĕр витрине çапса çĕмĕрес,—тет. Çапса çĕмĕрет витрине.



Киле таврӑнать. Ҳунямӑшӗ чуста ҫӑрать.

— Ҫин, мӗншӗн хӑрах витрепе анчах ӑсса килтӗн?—тет.

— Ӑсса килмесӗр,—тет.—Сармантейӗн сарӑ чӑххи сарӑ ҫӑмарта тунӑ, тет; ӑна шӑши пынӑ та хӳрипе ҫапса ҫӗмӗрнӗ, тет. Сармантей те йӗрет, тет, сарӑ чӑххи те какалать, тет, хапхи те уҫӑлса хупӑнать, тет, вӑкӑрӗ те мӗкӗрет, тет, шыв та хумханать.



Хунямăшĕ калать:
— Манăн та чустана кăларса ывăтас, — тет. Кăларса ывăтать.



Ывăлĕ кайнă вăрмана. Таврăнать вăрмантан.

Ывăлĕ калать:

— Мĕншĕн яшка пĕçермерĕр? — тет.

— Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă, — тет; ăна шăши пынă та хӳрипе çапса çĕмĕрнĕ, тет. Сармантей те йĕрет, тет, сарă чăххи те какалать, тет, хапхи те уçăлса хупăнать, тет, вăкăрĕ те мĕкĕрсе анать, тет, шыв та хумханать, тет, çĕнĕ çын та хăрах витрине çапса çĕмĕрнĕ.



Ывăлĕ калать:
— Манăн та хăрах атта кăларса ывăтас, — тет.
Кăларса ывăтать.
Пĕтрĕ.